Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчен пуçласа тухать

84 (7724) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи октябрĕн (юпа) 21-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Муркаш лицейĕ 10 çул тултарчĕ

## Сирĕн ăнăçу – пирĕн савăнăç



*Çитес эрне кун, юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче, «Муркаш лицейĕ» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕ хăй уçăлнăранпа вунă çул çитнине паллă тăвать. Çулсем иртнĕçемĕн коллектив та çĕнелсех пырать, анчах эсир сăн ӳкерчĕкре куракансем – лицейра малтанхи кунсенченех пуçласа вăй хуракансем.*

*Вĕсем (сулахайран сылтăмалла): физкультурăпа чăваш литературине вĕрентекен Э.А. Филиппова, лицейри хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ В.Г. Степанова, лицей директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ В.С. Иванова, компьютерсемпе ĕçлекен специалист А.Ф. Димитриева, химипе биологи вĕрентекен Н. В. Казакова.*

*Вĕсен ĕçĕ – паянхи лицейăн ăнăçу никĕсĕ.*

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Район администрацийĕнче

## Граждансен ыйтăвĕсем хуравсăр юлмаççĕ

Район администрацине тĕрлĕ ыйтупа çырусемпе çăхавсем сахал мар килеççĕ. Вĕсемпе кашнинпех тимлĕ пулни, ял çыннисене хумхантаракан ыйтусене вăхăтра татса пама тăрăшни кирлĕ. Çакă влаç органĕпе çынсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе пырассипе, çынсем влаç органне ытларах шанма пуçăнассипе те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

2009 çулхи виççĕмĕш кварталта район администрацине районта пурăнакансенчен 29 çыру килчĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтра кун пек çырусем 25 пулнăччĕ. Граждансем райадминистрацие çырупа тухасси иртнĕ çултанпах ӳссе пыни палăрать. 2007 çулхипе танлаштарсан, пĕлтĕр 25 çыру ытларах илтĕмĕр. 2009 çулхи пĕрремĕш кварталта унченхи çав вăхăтринчен 5 çыру, иккĕмĕш кварталта 19 çыру ытларах килчĕ.

Граждансем хускатакан ыйтусен содержанийĕпе характерне кура çырусене пăхса тухма район администрацийĕн структура подразделенийĕсене ярса панă.

Çырусене тишкерни çавна кăтартса парать. Вĕсенче хускатакан ыйтусен спектрĕ палăрмаллах улшăнчĕ. Çынсем ытларах çак ыйтусем тĕлĕшпе хурав илесшĕн:

– пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕсем – 5 çыру;

– коммуналлă тата йăла пулăшăвĕ парасси – 5 çыру;

– строительство ыйтăвĕсем – 4 çыру;

– суту-илӳ ыйтăвĕсем – 3 çыру;

– финанс ыйтăвĕсем – 3 çыру;

– агропромышленность комплексĕн ыйтăвĕсем – 3 çыру.

Пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕсем ытларах «Кивĕ çурт-йĕр» программăна пурнăçа кĕртнĕ май пурăнмалли условисене лайăхлатассипе çыхăннă. Нумай хваттерлĕ кивĕ çуртсем пурăнма юрăхсăрри пирки пĕлтереççĕ, çурт-йĕр туянма пулăшма ыйтаççĕ.

Строительство комплексĕн ыйтăвĕсем вĕсем – çулсем тăвасси, электропередача линийĕсем карасси, шыв пăрăхĕсен сечĕсене йĕркене кĕртесси.

Агропромышленность комплексĕпе çыхăннă ыйтусене хускатакан çырусенче граждансем ял хуçалăх предприятийĕсенчи паянхи лару-тăру пирки каласа пареççĕ, ял хуçалăх предприятийĕсен хăш-пĕр ертӳçисен ĕçне-хĕлне çирĕпрех контроллеме ыйтаççĕ. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсене йĕркелеме çĕр илме пулăшма ыйтакансем те пур.

Анализ кăтартса панă тăрăх, Муркаш ял тăрăхĕнчи граждансенчен çырусем ытларах килчĕç, пĕтĕмпе 6 çыру пулчĕ. Сатракасси ял тăрăхĕнчен 5 çыру килчĕ.

Отчетлă тапхăрта 9 çыру (31 процент) çӳлте тăракан организацисем урлă килнĕ. 12-шĕ вара (41 процент) – коллективлă çырусем.

Граждансен пур çырăвĕсене те вăхăтра пăхса тухнă тата авторĕсене çырупа çырса официаллă ответсем панă.

Кăçалхи виççĕмĕш кварталта район администрацийĕн пуçлăхĕ патĕнче 42 çын йышăнура пулчĕ. Граждансем ытларах пурăнмалли çурт-йĕр тата çĕр ыйтăвĕсемпе пыраççĕ.

**А. КРАСНОВ,**
**район администрацийĕн ĕçĕсен управляющийĕ.**

Пирĕн интервью

## Хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланчĕ

***Октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса хĕллехи тапхăра кĕтĕмĕр темелле. Районти пурăнмалли çурт-йĕре, шкулсене тата шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене, предприятисемпе организацисене, административлă çуртсене ăшă пырса тăма тытăнчĕ. Çавна май район хаçачĕн сотрудникĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçипе В.Г. НИКИТИНПА тĕл пулса районта хутса ăшăтмалли тапхăра епле хатĕрленсе кĕтсе илни, унăн малтанхи итогĕсем çинчен каласа пама ыйтнă.***

**– Владимир Германович, районта котельнăйсемпе топочнăйсем мĕн чухлĕ паян?**

– Çак вăхăта бюджет сферин объекчĕсемпе муниципаллă çурт-йĕр фондне пĕтĕмпе 17 котельнăйпа 110 топочнăй ăшăпа тивĕçтерет. Вăл шутран район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн учрежденийĕсем тĕлĕшпе 7 котельнăйпа 17 топочнăй, районти тĕп больница тĕлĕшпе – 38 топочнăй, Муркашри пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ тĕлĕшпе – 6 котельнăйпа 4 топочнăй, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ тĕлĕшпе – 4 котельнăйпа 3 топочнăй, ял тăрăхĕсем тĕлĕшпе – 48 топочнăй.

**– Котельнăйсемпе топочнăйсене ятарласа хăçан ĕçлеттерме тытăннă-ха?**

– Ку тĕлĕшпе район администрацийĕн пуçлăхĕ 2009 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнче «Хутса ăшăтмалли тапхăра пуçăнасси çинчен» 384-мĕш номерлĕ хушу кăларчĕ. Тулта талăкри вăтам температура 5 кун хушши 8 градус ăшăран кая тăрать пулсан, нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртсене, культура учрежденийĕсемпе административлă çурт-йĕре ăшă парса тăма тытăнма пăхнă. Çак хушăва тĕпе хурса вара 2009 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисене, районти сывлăха сыхлассин муниципаллă учрежденийĕсене ăшă парса тăма тытăнчĕç.

**– Хутса ăшăтмалли сезона уçнă май кĕтмен пăтăрмахсемпе кăлтăксем сиксе тухмарĕç-и-ха тата?**

– Пĕтĕмпех пыл та çу тесе каламастăп пулин те, пысăк пăтăрмахсем пирки сăмах пымасть. Çакă вăл хатĕрленӳ ĕçĕсене çу кунĕсенчех тытăннипе те çыхăннă.

Паянхи куна пур шкулсемпе ача сачĕсене те, больницăсене те, нумай хваттерлĕ çуртсемпе учрежденисене те ăшă йĕркеллĕ пырса тăрать.

Кăлтăксем тенĕрен, ытларахăшĕ вĕсем уйрăм çынсем тимсĕртерех пулнипе çыхăннă. Хăшĕсем крансене хупса хăварма маннă. Çапла вара хваттерсенче шыв кайнă тĕслĕхсем пулчĕç. Муркашри Октябре 50 çул урамра ăшă трассине кăштах улăштарма тиврĕ. Ытти енпе ăнсăртлăх таврашĕ пулман. Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен парăмсем пулманни те хутса ăшăтмалли тапхăра вăхăтра тытăнма май пачĕ.

Хăш-пĕр ял тăрăхĕсен территорийĕсенче Культура çурчĕсенче çак вăхăтра нимĕнле мероприятисем те иртмен пирки, газа пушăлла çунтарас мар тесе, топочнăйсене вăхăтлăх ĕçлеттермен тĕслĕхсем пур. Ку çапла пулмалла та тесе шутлатăп.

«Моргаушимежрайгаз» филиалĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, çанталăк сивĕтнине кура уйрăм çынсем пӳрт-çурта хутса ăшăтма хăйсен газ хуранĕсене ĕçлеттерме тытăннă май ку е вăл пăтăрмаха татса пама диспетчер патне шăнкăравланă тĕслĕхсем тăтăшах пулнă. Çавна май авари службин кунсерен çула тухма тивнĕ. Халĕ кун пек шăнкăравсем çукпа пĕрех ĕнтĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ

## Бюджет тăкакĕсене чакармалли хушма мерăсем çинчен

Чăваш Республикин республика бюджечĕн тăкакĕсене чакарас тĕллевпе **çапла йышăнатăп**:

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Чăваш Республикин 2009 çулхи республика бюджечĕн тупăшĕсем енĕпе палăртнă плана тултармасан:

Чăваш Республикин патшалăх влаçĕсен органĕсене пурлăх тĕлĕшĕнчен тивĕçтермелли тăкаксене 2009 çулхи IV кварталта бюджет обязательствисен лимичĕсене 40 процента çити чакарса пурнăçламалла;

2009 çулхи III кварталшăн Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсенче ĕçлекенсене ĕç кăтартăвĕсем тăрăх премисене Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсене тытса тăма кирлĕ нормативлă тăкаксенчен иртмесĕр Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе çеç тӳлемелле;

пурлăх ресурсĕсене перекетлессине «электрон правительствин» элеменчĕсене малалла аталантарса тата ĕçе кĕртсе тивĕçтермелле;

Чăваш Республикин республика бюджечĕн тĕп валеçекенĕсем тăрăх бюджет обязательствисен лимичĕсене çак Указăн 2 пунктне пурнăçлассине тивĕçтерме кирлĕ чухлĕ чакармалла;

Чăваш Республикин патшалăх граждан служащийĕсене укçа содержанине тата Чăваш Республикин патшалăх должноçĕсене йышăнакан çынсене укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен хавхалантарнине 2009 çулхи раштавăн иккĕмĕш çурришĕн тӳлемелли вăхăта 2010 çулхи кăрлачăн 11-мĕшĕ тесе палăртмалла;

Чăваш Республикин 2009 çулхи республика бюджетне палăртнă тупăшсем пырса кĕмесен Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ĕçченĕсен йышне 10 процента çити чакарасси çинчен сĕнӳсем тăратмалла.

2. 2009 çулта Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсене тытса тăма кирлĕ укçа-тенкĕ тăкаклассине Чăваш Республикин 2009 çулхи республика бюджетне тупăшсем тăрăх пурнăçланине кура тивĕçтерес, Чăваш Республикин патшалăх граждан служащийĕсен командировка, професси хатĕрленĕвĕ, çĕнĕрен хатĕрлессипе тата квалификацие ӳстерессипе валли палăртнă тăкаксене чылай чакарас.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене вырăнти бюджетсен тăкакĕсене чакарас тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене тытса тăма кирлĕ тăкаксене Раççей Федерацийĕн Бюджет кодексĕн 136 статйи тăрăх палăртнă нормативсемпе килĕшӳллĕн йĕркелесе пырас тĕлĕшпе çакнашкал йышăнусем кăларма сĕнес.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2009, юпа, 19, 70 №.

Тăхăр уйăх итогĕсем

## Ял хуçалăхĕ: ӳсен-тăран отраслĕ

Кăçал тĕш тырă районĕпе пĕтĕмпе 34,7 пин тонна пухса кĕртнĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, вăл 114,4 процент пулать. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче ăна 25,7 пин тонна (101,6 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 4,3 пин тонна (237,6 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 4,7 пин тонна (146 процент) пухса илнĕ.

Çĕр улми пĕтĕмĕшле 57,9 пин тонна кăларса пухнă. Иртнĕ çулхи кăтарту – 55,9 пин тонна. Вăл шутран «иккĕмĕш çăкăра» ял хуçалăх предприятийĕсенче 13,5 пин тонна (95,1 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 38,9 пин тонна (101,8 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 5,5 пин тонна (157,1 процент) туса илнĕ.

Тĕш тырă культурисен тухăçĕ ӳснĕ, кăçал вăл гектар пуçне вăтамран 23,9 центнерпа танлашнă. Иртнĕ çул 22,2 центнер пулнăччĕ. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче тухăç гектар пуçне 25,5 центнерпа (113,8 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 22,2 центнерпа (85,4 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 19 центнерпа (99,5 процент) танлашнă.

Çĕр улми тухăçĕ районĕпе гектар пуçне вăтамран 163,6 центнер пулнă. Иртнĕ çулхи тухăç – 181,6 центнер. Ял хуçалăх предприятийĕсенче çĕр улми тухăçĕ гектар пуçне 125,6 центнерпа (72,9 процент) кăна, уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 193 центнерпа (102 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 122,3 центнерпа (82,5 процент) танлашнă.

Çырăнтару

## Çак эрнере çырăнма тăрăшăр

Пурнăçра ыттисем мĕнле пурăннипе паллашни те пире тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тума май парать. Кунта вара хаçатжурнал çырăнса илни питĕ вырăнлă. Халĕ акă октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшĕччен хаçат-журнал ытларах çырăнтарас тĕллевпе ятарлă вунăкунлăх пырать. Апла пулсан район хаçатне, республикăри хаçат-журналсене çак эрнере çырăнса юлма тăрăшăр. Район хаçачĕсĕр, республикăра тухса тăракан изданисемсĕр пĕр ял тăрăхĕ те, предприятипе организаци те, учреждени те ан юлтăр.

**Л. ПАВЛОВА.**